**Кентти пичче кăвакалĕсем**

Пирĕн кӳршĕре Кентти пичче пурăнать. Ялта ăна Кентти сунарçă теççĕ. Чăннипе – çут çанталăк тусĕ вăл. Ĕненместĕр-и? Ун çинчен каласа парам-ха эппин.

Ял хыçĕнчи çырмана кам ишĕлми турĕ? Кентти пичче! Тайлăмне йывăç лартса тухрĕ те, çыран çирĕпленчĕ, ишĕлми пулчĕ.

Ял ачисене кам сунар халапĕ каласа парать? Каллех Кентти пичче! Хам та пайтах илтнĕ вăл каласа панине. Чавса тăршшех тыттарать. Çапах сунара кайсан мулкач е тилĕ çаклатмасăр таврăнмасть хăй.

Пĕррехинче эпĕ унран питĕ тĕлĕнтĕм. Сунартан тупăшсăрах таврăнчĕ. Кăвакал та пулин пиçиххинчен çаклатман хăть. Аллинче пĕчĕк карçынкка кăна. Кăмпаран е çырларан таврăнать тейĕн. Ыйтмасăр чăтаймарăм:

– Кентти пичче, паянхи сунар ăнăçсăр пулчĕ-им?

– Петюк, паянхи сунар пуринчен те ăнăçли,– шухăшлăн пĕлтерчĕ вăл.– Тăлăхсене çăлтăм. Пурăнсан курăн-ха.

Эпĕ нимĕн те ăнланмарăм. Çапах та тем вăхăтран кӳршĕсен картишĕнчен чăпар чăх кăлăкласа тухнине куртăм. Пĕр пуслăх чĕпĕ ертнĕ хăй. Хаваслă йыш кӳлĕ хĕррине анчĕ. Тĕмпĕл-тĕмпĕл тĕрĕллĕ чĕпсем пĕрин хыççăн тепри шыва сикрĕç, чăмпăлтатма пуçларĕç.

Эпĕ Кентти патне чупрăм.

– Инкек,– тетĕп,– чĕпсем шыва ӳкрĕç. Çăласчĕ.

Кентти пичче уншăн кулянмарĕ.

– Кăвакал шыва юратать. Халех вĕсене хăвалăхра йăва туса паратăп. Пурăнччăр,– терĕ.

Ак япала! Тинех тавăçрса илтĕм. Кентти сунара кăвакал тытма мар, браконьерсен сăтăрла ĕçне тӳрлетме кайнă иккен.

Тăлăха юлнă кăвакал çăмартисене пухса килнĕ те чăх йăвине хурса панă. Акă ăçтан тупăннă тĕмпĕл-тĕмпĕл йăрăмлă йăрă чĕпсем.

Кĕр енне кăвакал чĕпписем çитĕнчĕç. Кăлăк чăхă та вĕсенчен уйрăлчĕ. Каçсерен шăнтма пуçларĕ. Пĕррехинче шкула кайма тухнăччĕ. Пăхатăп – Кентти кăвакалĕсем тӳпенелле пăрр вĕçсе хăпарчĕç те кăнтăралла карталанса вĕçекен кăвакал ушкăнĕпе пĕрлешрĕç.

Эпĕ каллех кӳрше чупрăм.

– Кентти пичче, инкек! Кăвакалсем вĕçсе каяççĕ,– пĕлтертĕм пашка-пашка.

Паллă сунарçă вĕсене чарас тесе пӳрне те хускатмарĕ:

– Кайĕçин. Телейлĕ çул сунатăп. Çуркунне хăйсемех килеççĕ.

Кайăк кăвакалсене сунарçă мĕншĕн ирĕке янă-ши? Тавçăртăр-и, ачасем?

*Ишентей, Н. Кентти пичче кăвакалĕсем : [калав] / Н. Ишентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 413.*